26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 НОЯБРЬ 14 ВЫРСАРНИКУН 226(6463) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ***ВАТУТИНА***

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступлени туса пырса, ноябрĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, утлă çарпа пехота çав тери хăвăрт пырса çапнипе, Украинăри пысăк область центрне—**Житомир** хулине—çулйĕрсен питĕ паха тĕввине тата нимĕçсен оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пунктне—тытса илнĕ.

Житомир хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче **Баранов** генерал-лейтенантăн кавалерисчĕсемпе **Москаленко** генерал-полковникăн çарĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах çаксем чапа тухнă:

Овар генерал-майорăн Блинов ячĕпе тăракан 1-мĕш гвардейски Ленин орденлĕ Хĕрлĕ ялавлă Ставропольски кавалери дивизийĕ, **Мамсуров** полковникăн 2-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Крымски УССР Совнаркомĕ ячĕпе тăракан кавалери дивизийĕ, **Васильев** полковникăн 7-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă кавалери дивизийĕ, **Ермоленко** майорăн 61-мĕш уйрăм танковăй полкĕ, **Ивашов** подполковникăн 87-мĕш уйрăм танковăй полкĕ, **Щербаков** подполковникăн 230-мĕш уйрăм танковăй полкĕ, **Никулин** подполковникăн 1461-мĕш хăй тĕллĕн çўрекен артиллери полкĕ, **Бастеев** полковникăн 23-мĕш Киевски стрелковăй дивизийĕ, **Янковский** полковникăн 30-мĕш Киевски стрелковăй дивизийĕ, **Скляров** генерал-майорăн 218-мĕш Ромодански-Киевски стрелковăй дивизийĕ, артиллери генерал-майорĕн **Волкинштейнăн** 17-мĕш Киевски артиллери дивизийĕ, **Голубев** подполковникăн 83-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ, **Середняк** подполковникăн 1-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ, **Калашников** подполковникăн 143-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, **Кодяков** майорăн 222-мĕш Киевски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, **Черняк** подполковникăн 1660-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, **Богатырев** подполковникăн 839-мĕш Киевски гаубицăллă артиллери полкĕ.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, **Житомир** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăçсене „**Житомирски**" тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чăçсене çапла чĕнмелле тăвас:

1-мĕш гвардейски Житомирски УССР Совнаркомĕ ячĕпе тăракан кавалери корпусĕ,

7-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Житомирски кавалери дивизийĕ,

61-мĕш Житомирски уйрăм танковăй полк,

87-мĕш Житомирски уйрăм танковăй полк,

230-мĕш Житомирски уйрăм танковăй полк,

1461-мĕш Житомирски хăй тĕллĕн çўрекен артиллери полкĕ,

23-мĕш Киевски-Житомирски стрелкавăй дивизи,

30-мĕш Киевски-Житомирски стрелковăй дивизи,

17-мĕш Киевски-Житомирски артиллери дивизийĕ,

83-мĕш гвардейски Житомирски минометнăй полк,

1-мĕш гвардейски Житомирски минометнăй полк,

143-мĕш Житомирски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

222-мĕш Киевски-Житомирски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

1660-мĕш Житомирски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

839-мĕш Киевски-Житомирски гаубицăллă артиллери полкĕ.

1-мĕш гвардейски Житомирски УССР Совнаркомĕ ячĕпе тăракан кавалери корпусне, 2-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Крымски УССР Совнаркомĕ ячĕпе тăракан кавалери дивизине, 218-мĕш Ромодански-Киевски стрелковăй дивизие **Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе наградăлама тăратас.

1-мĕш гвардейски Блинов ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ Хĕрлĕ ялавлă Ставропольски кавалери дивизине 2-мĕш степень **Суворов** орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, ноябрĕн 13-мĕшĕнче, 19 сехет те 30 минутăра, пирĕн Тăван çĕршыв столици **Мускав Житомир** хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене, икçĕр çирĕм тăвата тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питех те чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, **Житомир** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, **тав тăватăп**.

Хамăр тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешўре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи ноябрĕн 13-мĕшĕ.

Социализмлă Ĕç Геройĕсене—В. М. Молотова, Л. П. Берия, Г. М. Маленкова тата А. И. Микояна Ленин орденĕпе „Серп и Молот" ылттăн медаль пани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ ноябрĕн 12-мĕшĕнче В. М. Молотов юлташа, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче танксем туса кăларас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе уйрăмах паха ĕçсем тунăшăн наградăланăскере, Л. П. Берия юлташа, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче хĕçпăшалсемпе боеприпассем туса кăларас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе уйрăмах паха ĕçсем тунăшăн наградăланăскере, Г. М. Маленков юлташа, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче самолетсемпе моторсем туса кăларас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе уйрăмах паха ĕçсем тунăшăн наградăланăскере, А. М. Микоян юлташа, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче Хĕрлĕ Çара апат-çимĕç, горючи тата тĕрлĕ япаласем парса тăрас тĕлĕшпе уйрăмах паха ĕçсем тунăшăн наградăланăскере, Социализмлă Ĕç Геройĕн званине пани çинчен калакан грамотăпа пĕрле Ленин орденĕ тата «Серп и Молот» ылттăн медаль панă. (ТАСС).

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ йышăннă законсемпе постановленисем

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин бюджетне 1943 çулхи 9 уйăх хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен йышăннă

ЗАКОН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

1. Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин бюджетне 1943 çулхи 9 уйăх хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен калакан отчета тупăшсем енĕпе пĕтĕмпе 106.843,0 пин тенкĕлĕх тата расходсем енĕпе пĕтĕмпе 91.649,0 пин тенкĕлĕх çирĕплетес.

2. Çак постановленин 1-мĕш статьипе килĕшўллĕн, Чăваш АССР-ĕн республика бюджетне пурнăçа кĕртни çинчен калакан отчета тупăшсем енĕпе 30.959,3 пин тенкĕлĕх, расходсем енĕпе 25.020,9 пин тенкĕлĕх çирĕплетес.

3. Районсемпе хуласен бюджетне пурнăçа кĕртни çинчен калакан отчета тупăшсем енĕпе 93.776 пин тенкĕлĕх, расходсем енĕпе 66.628 пин тенкĕлĕх çирĕплетес.

4. Бюджета 1943 çулхи 9 уйăх хушшинче çителĕксĕр пурнăçа кĕртнине палăртса, Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне 1943 çулхи бюджета пурнăça кĕртмелле тума. Чăваш АССР бюджетĕнче палăртса хунă социаллă-культурăллă тата хуçалăх мероприятийĕсем валли пĕр чăрмавсăр укçа-тенкĕ парса тăмалла тума хушса хăварать.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентесси çинчен калакан закона пурнăçа кĕртни çинчен Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ йышăннă постановлени

Чăваш АССР Верховный Совечĕ çакна палăртать: пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентесси çинчен калакан закона пурнăçа кĕртни Чăваш республикинчи ĕçсыннисене культура енĕпе ўссе пыма çав тери анлă майсем туса пачĕ. Ачасене пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентесси пĕтĕм халăх ĕçĕ, государство ĕçĕ пулса тăчĕ.

Республикăра çулран çулах шкулсен йышĕ ўссе пычĕ, вĕренекенсен хисепĕ ўсрĕ тата пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентме бюджетран паракан укçа-тенкĕсен хисепĕ ўссе пычĕ: 1930-мĕш çулта, пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентмелли çинчен калакан закона вăя кĕртнĕ çулта, Чăваш республикинче 96.500 ача вĕреннĕ, халăха хут вĕрентес ĕç валли 10.395.200 тенкĕ укçа панă, 1943 çулта вара Çутĕç Халăх Комиссариачĕн шкулĕсенче 157.813 ача вĕренет, çав ĕç валли 44.700 пин тенкĕ укçа уйăрса панă. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр, пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентес ĕç валли бюджетран укçа-тенкĕ уйăрса парасси отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пĕр миллион тенкĕ чухлĕ ўснĕ.

Чăваш АСС Республикинчи хуласемпе ялсенче сталинла пятилеткăсем хушшинче шкулсем валли вуншар питĕ лайăх çуртсем туса лартнă. Педагогика вĕренў заведенийĕсенче шкулсем валли пинĕ-пинĕпе учительсем вĕрентсе хатĕрленĕ. Вĕренекенсем валли çулсеренех тăван чĕлхепе учебниксем нумайăн пичетлесе кăлараççĕ.

Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр, Елчĕк, Çĕрпў районĕсем пуçламĕш шкулсенче вĕренме ачасене пурне те явăçтарнă, Канаш хулинче вара 7 çул вĕрентме ачасене пурне те явăçтарнă. Ĕçсынни депутачĕсен нумай ял совечĕсем обязательнăй йĕркепе хут вĕрентес ĕçе пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн тăрăшаççĕ. Çапла, сăмахран, Шупашкар районĕнчи ĕçсынни депутачĕсен Çĕньял ялсовечĕ, вĕренĕве ачасене пурне те явăçтарас шутпа, ачасен интернатне туса апат çитерес ĕçе организациленĕ; Çĕрпў районĕнчи ĕçсынни депутачĕсен Лĕпсер ялсовечĕ çар çыннисен ачисемпе тăлăх ачасене пулăшас енĕпе лайăх ĕç пуçарчĕ, унăн примерне пирĕн республикăри ытти ялсовечĕсем те йышăнса илчĕç.

Анчах та, шкулсемпе кадрсем çителĕклех пулин те, пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентес ĕçе пўр ачасене те явăçтарман-ха. Пуçламĕш шкулсенче 101.378 ача вĕренмелле пулсан, 99.651 ача кăна вĕренеççĕ, çакă вăл 98,3 процент пулать. Республикăри органсене тўрех пăхăнса тăракан хуласенче çичĕ çул вĕрентес ĕçе 2.879 çынна явăçтармалла пулсан, 2.797 ачана çеç явăçтарнă, çакă вăл 97,1 процент пулать. Ачасене шкула çўретес ĕç уйрăмах Улатăр, Етĕрне, Шăмăршă, Пăрачкав тата Куславкка районĕсенче начар пулса пырать.

Ĕçсынни депутачĕсен районсенчи совечĕсен хăшпĕр исполкомĕсем вĕренў çулĕ тĕлне шкулсене кирлĕ пек хатĕрлесе çитереймерĕç. Етĕрне, Çĕрпў, Çĕмĕрле, Чкаловски районсем шкулсенче занятисем пуçланнă тĕле шкул çурчĕсене юсаса çитереймерĕç.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ шкулсем валли вутă турттарас ĕç çак районсенче уйрăмах çителĕксĕр пулса пынине палăртать: Чкаловски район çулталăкра кирлĕ вутăн 2 процентне кăна, Сĕнтĕр районĕ 7 процент, Шăмăршă районĕ 10 процент, Элĕк районĕ 11 процент кăна турттарса тухнă.

Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ, промысла кооперацин системи, Суту-илў Халăх Комиссариачĕ, Чăвашпотребсоюз пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентес ĕçпе çыхăнса тăракан мероприятисене пăчах та çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ **çапла йышăнать:**

1. Çутĕç Халăх Комиссариатне, районсенчи, хуласенчи, поселоксенчи тата ялсенчи ĕçсынни депутачĕсен совечĕсене, 7 çултан пуçласа 15 çула çитнĕ ачасене тата подростоксене тĕрĕс шута илсе тухса, яллă вырăнсенче ачасене пурне те пуçламĕш шкулта вĕренме тата хуласемпе рабочи поселоксенче 7 çул вĕренме пĕтĕмĕшпех явăçтарма хушас, ачасем вĕренме пăрахасси пулмалла мар тума хушас.

Ачасем шкула пымасăр юлнă чухне кашни хутĕнчех ачасене шкулта вĕренме чăрмантаракан сăлтавсене сирес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Ачасене шкулта вĕренме вăхăтра яманшăн тата вĕсене вĕренме вăхăтра çўремешкĕн майсем туса паманшăн ашшĕ-амăшĕсене тата ача усракан çынсене, обязательнăй йĕркепе хут вĕрентесси çинчен калакан закон тăрăх, администраци йĕркипе ответ тыттармалла. Ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасене вĕренме çўретес ĕç çине уйрăмăнах çавăрănса пăхмалла.

Ачасене 7 çул чултарнă хыççăн хут вĕрентес ĕçе 1944—1945-мĕш вĕренў çулĕнчен тытăнмалла тăвас.

2. Çутĕç Халăх Комиссариатне, районсенчи, хуласенчи, поселоксенчи тата ялсенчи ĕçсынни депутачĕсен совечĕсене шкул çурчĕсене лайăхлатас, анлăлатас тата сыхласа усрас енĕпе мерăсем йышăнма хушас, вĕсене вăхăтра ремонт тума тата лайăх пăхса усрама хушас.

Шкулсемпе учительсен хваттерĕсем валли вăхăтра вутă хатĕрлесе памалла, çулталăкри нормăн çурри чухлĕ вутă тепĕр çула запас юлмалла тăвасси, правило пекех, çирĕп йĕрке пулса тăмалла.

3. Çутĕç Халăх Комиссариатне, Чăвашсен Государство Издательствине тата Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Полиграфи промышленность Управленине учебниксен пахалăхне лайăхлатма тата вĕсене вĕренў çулĕ пуçланнă тĕле вăхăтра пичетлесе кăлармалла тума хушас.

4. Çутĕç Халăх Комиссариатне, районсенчи, хуласенчи тата ялсенчи ĕçсынни депутачĕсен совечĕсене вĕренекенсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе вăйлăнрах ĕçлеме хушас, çак майпа шкулсем çумĕнчи участоксемпе усă курассине йĕркелемелле, вĕри апат çитерес ĕçе тата интернатсем организацилемелле, çар çыннисен ачисемпе ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасене пулăшма всеобуч фончĕсем тумалла.

5. Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариатне çапла тума хушас:

а) шкулсенче вĕренўпе воспитани ĕçĕн пахалăхне çĕклемелле; тăван тата уйрăмах вырăс чĕлхине лайăх вĕрентесси çине, вĕренекенсем хушшинче çирĕп дисциплина тăвасси çине уйрăмах çавăрăнса пăхмалла, вĕренекенсем хăйсене мĕнле тыткаламалли çинчен РСФСР Правительстви çирĕплетнĕ правилăсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла;

б) шкулсемпе учительсен ĕçне контрольлесе тата ертсе пырассине лайăхлатмалла; учительсен квалификацине ўстерес тата çамрăк учительсене пулăшу парас ĕçе лайăхлатмалла, çак ĕçре педагогикăри малта пыракан чи лайăх мастерсен опычĕпе анлăн усă курмалла;

в) шкул çурчĕсене культурăллă тата таса та йĕркеллĕ тытса тăмалла, шкулсенче санитарипе гигиена хушнисене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла, вĕренекенсем кашниех гигиена правилисене пурнăçа кĕртсе пымалла тăвасси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмалла;

г) шкулсенче çар ĕçне вĕрентессине лайăхлатмалла, кадрсем суйласа илес тата хатĕрлес, вĕренў пособийĕсем пухса çитерес ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла;

д) учительсем вĕрентсе хатĕрлекен педагогика вĕренў заведенийĕсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалла тата учительсен нациллĕ кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçĕн пахалăхне ўстермелле.

6. Чăваш АССР Верховный Совечĕн Сессийĕ Чăваш АССР Суту-илў Халăх Комиссариатне тата Чăвашпотребсоюза учительсене апат-çимĕçсемпе промтаварсем парса тăрасси çинчен ССР Союзĕн Правительстви йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртме хушать

7. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне обязательнăй йĕркепе пурне те хут вĕрентесси çинчен калакан закона пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем мĕнле пулса пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăма хушас тата пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентес, учительсене апат-çимĕçсемпе промтаварсем парса тăрас ĕçпе çыхăнса тăракан заданисене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте наркоматсемпе республикăри организацисем умне çирĕп требованисем лартма хушас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Чăваш АСС Республикин Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 14-мĕш тата 68-мĕш статьисене хушса çырасси çинчен йышăннă

ЗАКОН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

Улатăрпа Канаш хулисене Улатăрпа Канаш районĕсенчен уйăрнине тата вĕсене Чăваш АСС Республикин государство влаçĕн чи аслă органĕсене тўрех пăхăнса тăракан хуласен йышне кĕртнине çирĕплетес:

Çакна май Чăваш АССР Конституцийĕн 14-мĕшпе 68-мĕш статьисене çакăн пек улăштарса çырас:

«14 статья. Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикине çак районсем кĕреççĕ: Улатăр, Элĕк, Вăрнар, Йĕпреç, Ишлей, Калинино, Канаш, Куславкка, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Первомайски, Пăрачкав, Советски, Сĕнтĕр, Вăрмар, Çĕрпў, Шупашкар, Чкаловски, Шăмăршă, Шăхасан, Çĕмĕрле, Етĕрне, Елчĕк, Тăвай районĕсем тата Чăваш АСС Республикин государство влаçĕн чи аслă органĕсене тўрех пăхăнса тăракан Улатăр, Канаш, Шупашкар хулисем».

«68 статья. Улатăр, Канаш, Шупашкар хулисен ĕçсынни депутачĕсен совечĕсен отделĕсем хăйсен ĕçĕнче Улатăр, Канаш, Шупашкар хулисен ĕçсынни депутачĕсен совечĕсене тата вĕсен исполнительнăй комитечĕсене, çавăн пекех тата Чăваш АСС Республикин тивĕçлĕ Халăх Комиссариатне тўрех пăхăнса тăраççĕ».

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ пулма А. М. Матвеев юлташа уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетесси çинчен

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ пулма Антон Матвеевич Матвеев юлташа уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Ф. Т. Семенов юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетесси çинчен

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Федор Тимофеевич Семенов юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ йышăннă законсемпе постановленисем

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ М. Ф. Терентьев юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетесси çинчен

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Михаил Федорович Терентьев юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси синчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ К. Е. Евлампьев юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетесси çинчен

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Константин Евлампьевич **Евлампьев** юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Г. М. Никитин юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетесси çинчен

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Георгий Михайлович **Никитин** юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ В. П. Чернов юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетесси çинчен

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Вадим Петрович **Чернов** юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси синчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Ф. В. Васильев юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетесси çинчен

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховный Совечен Президиумĕ Федор Васильевич **Васильев** юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ А. И. Киреев юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетесси çинчен

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Алексей Иванович **Киреев** юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

ЧАВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧЕН ПРЕЗИДИУМЕ П. П. ГЕРАСИМОВИЧ ЮЛТАША ЧАВАШ АССР ХАЛАХ КОМИССАРЕСЕН СОВЕЧЕН ПРЕДСЕДАТЕЛЬ ЗАМЕСТИТЕЛЕ ПУЛСА ЕÇЛЕМЕ УЙАРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН ЙЫШАННА УКАЗА ÇИРЕПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Павел Петрович **Герасимович** юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

ЧАВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМЕ П. В. ТОЩЕВ ЮЛТАША ЧАВАШ АССР ГОСУДАРСТВЕННАЙ ПЛАНОВАЙ КОМИССИН ПРЕДСЕДАТЕЛЕ ПУЛМА УЙАРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН ЙЫШАННА УКАЗА ÇИРЕПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Петр Васильевич **Тощев** юлташа Чăваш АССР Государственнăй Плановăй Комиссин Председателĕ пулма уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

ХАЛАХ КОМИССАРЕСЕМ ТАТА ЧАВАШ АССР ХАЛАХ КОМИССАРЕСЕН СОВЕЧЕ ÇУМЕНЧИ УПРАВЛЕНИСЕН НАЧАЛЬНИКЕСЕМ ПУЛМА УЙАРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН ЧАВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМЕ ЙЫШАННА УКАЗСЕНЕ ÇИРЕПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ çаксене уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указсене çирĕплетес:

Чăваш АССР-ĕн Государство хăрушсăрлăх Халăх Комиссарĕ пулма — Леонид Карпович **Щербакова**.

Чăваш АССР-ĕн Юстици Халăх Комиссарĕ пулма — Андрей Терентьевич **Краснова**.

Чăваш АССР-ĕн Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ пулма — Алексей Ильич **Лихачева**.

Чăваш АССР-ĕн Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссарĕ пулма — Прасковья Ивановна **Калинкинăна**.

Чăваш АССР-ĕн Çутĕç Халăх Комиссарĕ пулма — Михаил Петрович **Макарова**.

Чăваш АССР-ĕн Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ пулма — Дмитрий Григорьевич **Ларионова**.

Чăваш АССР-ĕн Финанс Халăх Комиссарĕ пулма — Иван Ильич **Золотникова**.

Чăваш АССР-ĕн Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕ пулма — Михаил Данилович **Егорова**.

Чăваш АССР-ĕн Коммунальнăй хуçалăх Халăх Комиссарĕ пулма — Георгий Никитич **Сорокина**.

СССР Хатĕрлев Наркомачĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕ пулма — Тимофей Герасимович **Герасимова**.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Строительство материалĕсен промышленносĕн Управленийĕн Начальникĕ пулма — Антон Клементьевич **Дембицкие**.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Управленийĕн Начальникĕ пулма — Александр Дмитриевич **Кăлгана**.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Автомобиль транспорчĕн Управленийĕн Начальникĕ пулма — Николай Сергеевич **Короткова**.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Д. Я. МИТЬКОВ ЮЛТАША ЧАВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧЕН ПРЕЗИДИУМ ПРЕДСЕДАТЕЛЕН ЗАМЕСТИТЕЛЕ ПУЛМА СУЙЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Дмитрий Яковлевич **Митьков** юлташа Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиум Председателĕн заместителĕ пулма суйлас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ

А. И. ИЗМАЙЛОВ ЮЛТАША ЧАВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМЕН СЕКРЕТАРЕ ПУЛМА СУЙЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Александр Измайлович **Измайлов** юлташа Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ пулма суйлас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕшĕн **Г. ГУСЕВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

П. А. ГРИГОРЬЕВА, Г. М. ГУСЕВ, Е. Д. ДМИТРИЕВА, К. Р. ЕВДОКИМОВА ТАТА К. Т. НАЗАРОВ ЮЛТАШСЕНЕ ЧАВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМЕН ЧЛЕНЕ ПУЛМА СУЙЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Прасковья Александровна **Григорьева**, Григорий Михайлович **Гусев**, Евдокия Дмитриевна **Дмитриева**, Клавдия Родионовна **Евдокимова** тата Константин Тимофеевич **Назаров** юлташсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн членĕ пулма суйлас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

В. П. ГЛИНСКАЯ, А. Е. ЕВСЕЕВ, А. И. МИЛОВИДОВ, И. Т. ТИМОФЕЕВ, А. Ф. ФРАНЦМАН ТАТА Г. И. ХАРИТОНОВ ЮЛТАШСЕНЕ ЧАВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СУЧЕН ЧЛЕНЕ ПУЛМА СУЙЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Вера Павловна **Глинская**, Александр Евсеевич **Евсеев**, Арсентий Иванович **Миловидов**, Иван Тимофеевич **Тимофеев**, Август Фрицевич **Францман** тата Геврасий Иванович **Харитонов** юлташсене Чăваш АССР Верховный Сучĕн членĕ пулма суйлас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çар Çурчĕн художникне Л. И. Осинские Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Изобразительнăй искусство ĕçĕнче тунă çитĕнӳсемшĕн Хĕрлĕ Çар çурчĕн художникне Леонид Иванович **Осинские** Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1943 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕ.

Смоленск колхозникĕсем сĕнĕ пӳртсенче пурăнма пуçлаççĕ

Гитлерла оккупантсем Смоленск облаçĕнчи колхозниксен темиçе пин суртне çунтарса е ватса пĕтернĕ. Темиçе çĕр яла çĕр пичĕ çинчен пĕтĕмĕшпех шăлса пăрахнă.

Ирĕке тухнă районсенчи колхозниксем, нимĕçсене хăваласа ярсан тепĕр куннех çуртйĕрсем тума пуçларĕç. Вĕсем мĕн пурĕ 22.451 çурт юсаса е çĕнĕрен туса лартнă. Çĕнĕрен тунă е юсанă çуртсене халь çĕр пӳртсенче, ишĕлсе пĕтнĕ пӳртсенче пурăнакан 104 пин çынна вырнаçтарнă. Козельски районра çĕнĕрен 7 ял туса лартнă. Издешковски районри колхозниксем 2 уйăх ытларах вăхăтра 1.626 çурт çĕнĕрен тунă е юсанă.

Нимĕç оккупанчĕсенчен калама çук пысăк асап тӳссе ирттернĕ колхозниксен темиçе пин çемьи Октябрь уявĕ 26 çул тултарнине çĕнĕ пӳртсенче кĕтсе илнĕ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем Житомир облаçĕнчи район центрне—КОРОСТЫШЕВ хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсен шутĕнче КРАСИЛОВКА, ВОЛОДАРКА, ТЕРМАХОВКА, ОБУХОВИЧИ, СЛОБОДА КУХАРСКАЯ, ПЕНИЗЕВИЧИ, ФЕДОРОВКА, МИРЧА, ДЕТИНЕЦ, РУСАНЕВКА, ЛЯХОВАЯ, ЗАНЬКИ, ЧАЙКОВКА, ТОРЧИН, СЛИПЧИЦЫ, СЛОБОДКА, ШАХВОРОСТИВКА, ВОДОТЫЙ, БОЛЯЧЕВ, ГНИЛЕЦ, СОБОЛЕВКА, ЛИПКИ, КРИВОЕ ятлă пысăк ялсем тата ИРША, ПЕНИЗЕВИЧИ, СКОЧИЩЕ ятлă чугун çул станцийĕсем пур. ФАСТОВ районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă.

КЕРЧЬ çурутравĕ çинче пирĕн çарсем плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă. Тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ пункчĕсене чылайĕшне тытса илнĕ.

РЕЧИЦАРАН кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, темиçе ял тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 113 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 18 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Пирĕн чаçсем, Киевпа Житомир хушшинчи шоссе çулĕпе малалла куçса пырса, Коростышев хули патне çитнĕ. Çав паха тĕреклĕ пункта хӳтĕленĕ тăшман çарĕсемпе çапăçма пуçланă. Çав хушăра кавалеристсем хулана çурçĕртен çавăрса илнĕ те нимĕçсене сасартăк пырса çапнă. Хаяр çапăçу хыççăн тăшман гарнизонне аркатса тăкнă. Коростышев хулине йышăнса илнĕ чухне пирĕн çарсем 24 тупă, вĕсен шутĕнче хăй тĕллĕн çӳрекен 2 тупă, çар хатĕрĕсем тиенĕ 300 автомашинăпа лавсем, 10 склад тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Фастов хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре нимĕçсем хăйсен пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсене пĕр çĕре пухнă та пирĕн çарсене хирĕç темиçе хутчен те контратака тунă. Кун каçиччене хаяррăн çапăçнă, тăшмана йывăр сухату кӳнĕ. Нимĕçсен 70 танкĕпе бронемашинине çити, хăй тĕллĕн çӳрекен 3 туппине тата 26 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ.

* * *

Керчь çурутравĕ çинче пирĕн çарсем плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пунктне тытса илнĕ. Керчь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем тăшман оборонине шăтарса кĕнĕ те пĕр ял районĕнче нимĕçсене хăюллă маневр туса çавăрса илнĕ. Тăшман хăйĕн çавăрса илнĕ çарĕсен чаçĕсене катерсем çине лартса илсе кайма хăтланнă. Совет артиллерисчĕсем тăшманăн темиçе катерне шыва путарнă, ытти судниссене çыран патне сывăхарма паман. Пирĕн боецсем хаяр тытăçура тăшманăн çавăрса илнĕ ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 1500 виллине çити выртса юлнă. Гитлеровецсем нумайĕшĕ тинĕсре путса вилнĕ. Пирĕннисем 26 тупă, 14 миномет, 70 пулемет, 1.500 винтовкăпа автомат ытла, 10 прожектор, боеприпассен тата тĕрлĕ çар пурлăхĕн 8 складне тытса илнĕ. Тыткăна чылай илнĕ. Керчь хулинчен кăнтăртарахра тăшман çапăçса разведка тума хăтланнă, анчах та ăна малтанхи позици патне ывăтса янă.

* * *

Речицăран кăнтăртарахра, Днепр шывĕн сылтăм енче, пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе, утăм хыççăн утăм малалла куçса пынă, темиçе ял тытса илнĕ. Çав ялсемшĕн пынă çапăçусенче 1.000 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 16 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 5 туппине, 38 хир туппине, 35 миномет тата 2 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 15 тупă, 11 миномет, 60 пулемет, 4 радиостанци тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Совет летчикĕсем нимĕç çарĕсен вăрçăри речĕсене пыра-пыра çапнă, темиçе танк, 20 ытла хир туппипе çӳлелле перекен тупă, çарсемпе çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 100 автомашинăна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белосток облаçĕнче кĕрешекен партизансен ушкăнĕ тимĕрпе бетонран тунă пысăк кĕпере сирпĕнтерсе янă. Шоссе çулĕн питех те кирлĕ участокĕнче тăшман автотранспорчĕ çӳресси нумай вăхăтлăха чарăнса ларнă. Белосток облаçĕнчи партизансен тепĕр ушкăнĕ фронталла пыракан нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Паровоз тата çарсем турттарса пыракан 15 вагон çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр пысăк яла кĕрсе кайнă та тăшманăн горючи складне вут тĕртсе янă. 80 тонна ытла бензин çунса кайнă.

* * *

Нимĕçсен 11-мĕш танковăй дивизийĕнчи 110-мĕш мотополкăн тыткăна лекнĕ салтакĕ Бернгард Дассек çапла каласа кăтартнă: «Мана çар ĕçне Францире 372-мĕш запасри батальонра вĕрентрĕç. Çак çулхи май уйăхĕнче мана 369-мĕш гренадерски полка, 10-мĕш ротăна ячĕç. Ку полк Тулон патĕнче тинĕс çыранĕсене хуралласа тăратчĕ. Итали парăнсан, пирĕн полк итальянецсен альпийски батальонĕсене хĕçпăшалсăрлантарнă çĕрте пулчĕ. Сентябрь уйăхĕн юлашки кунĕсенче 369-мĕш полкăн 3-мĕш батальонне васкасах Совет Союзĕпе Германи фронтне илсе килчĕç. Эпир çак маршрутпа килтĕмĕр: Марсель—Лион—Дижон—Нюрнберг — Прага—Львов. Çапăçусен районне батальон октябрь уйăхĕн варринче çитрĕ. Пире 11-мĕш танковăй дивизие ячĕç. Фронтри лару-тăру мана хăратса тĕлĕнтерсе ячĕ. Темиçе хутчен ăнăçсăр контратакăсене кĕрсе тухнă хыççăн салтаксем питĕ пысăк хуйха ӳкрĕç. Пурте пăтрашса кайнă, ним пĕлми пулчĕç. Эпĕ шанчăксăр ĕçшĕн çапăçма шутламарăм, тыткăна парăнтăм».

* * *

Чернигов облаçĕнчи Кувечичи ялĕнчи çынсем нимĕç захватчикĕсен тискер ĕçĕсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: «Кăçалхи апрель уйăхĕн 28-мĕшĕнче пирĕн ялти халăха нимĕç ирсĕрĕсем çав тери тискер асап кăтартрĕç. Нимĕç автоматчикĕсем ял тавра тăчĕç те ялти пӳртсене вĕсенчи çынсемпе пĕрлех çунтарма пуçларĕç. 340 килтен 270 кил çунса кайрĕ. Вутра ватă çынсем, хĕрарăмсем тата пĕчĕк ачасем, пурĕ 160 çын, çунса кайрĕç. Хăшпĕр хресченсем çавăн пекех тата хăйсен пĕчĕк ачисемпе пĕрле тарма хăтланчĕç. Гитлеровецсем вĕсене автоматсемпе печĕç. Фашистла чунилленсем кун каçиччене ялти пĕр айăпсăр халăха юн юхтарса асаплантарчĕç. Эпир çав куна нихăçан та манас çук. Эпир шанса тăратпăр: пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕç ирсĕрĕсене пирĕн куççульпе хуйхăшăн тивĕçлипе тавăрĕ».

Акт çине алă пуснă: Кувечичи ялсовечĕн председателĕ П. Ланько, колхозниксем О. Кругляк, Д. Савченко, А. Ланькова, П. Лясун, Е. Шуляк, А. Шестяк тата ыттисем те.

Трактористсем патĕнче

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕн Сталин юлташăн докладне Шăхасан МТС коллективĕ пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕ. Ноябрĕн 7-мĕшĕнче кунта кĕске митинг пулса иртрĕ. Трактористсем хăйсен шухăш-кăмăлĕсене тухса каларĕç. Вĕсем, Сталин юлташ доклачĕпе тата Хĕрлĕ Çар тăвакан çĕнтерӳсемпе хавхаланса, çĕнĕ çитĕнӳсем тума обязательствăсем илчĕç.

МТС трактор ĕçĕсен планне августăн 10-мĕшĕ тĕлне 101 процент тултарнă. Пур трактор бригадисем те хăйсен планĕсене ăнăçлăн пурнăçланă. Кăçал пĕтĕмпе 9.000 литр горючи перекетлесе хăварнă. Коммунист Тимофеев ертсе пыракан 6-мĕш трактор бригади çулталăкри плана 170 процент тултарнă, 2.636 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Трактористка Е. Федорова çулталăкри плана 198 процент, А. Емельянов—163 процент тултарнă. Çавăн пекех Яшманова, Макаров трактористсем те начар мар ĕçленĕ.

Митинга пухăннă трактористсемпе комбайнерсем кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче пулнă çитменлĕхсем çинчен те чăрăнса тăчĕç. Вăл çитменлĕхсем, пуринчен ытларах, ĕçри дисциплинăна çирĕп пăхăнса пыман пирки пулнă. МТС дирекцийĕ тракторсене куçса çӳреме çирĕп маршрут тунă пулин те, хăшпĕр трактор бригадисем ăна пăхăнман, хăйсене ирĕккĕн куçса çӳренĕ. Çапла вара çакă вăл ĕçре чылай чăрмавсем кӳнĕ.

Трактористсем халĕ хĕрсех тракторсене юсаççĕ. Вĕсем декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тракторсемпе пур ялхуçалăх машинисене те юсаса çитерме сăмах пачĕç.

Степан АСЛАН.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1870 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 84 п. л.